Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НĂРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | N8 (4577) | *1998 çулхи январь (кăрлач) уйăхĕн 23-мĕшĕ, эрнекун* | *Палăртнă хакпа.*

***Чыс та мухтав сире, ял хуçалăх ĕçченĕсем!***

**Районти агропромышленность комплексĕн ĕçре малта пыраканĕсен слетне халалланă материалсене 2,3-мĕш страницăсенче вулăр.**

Районти агропромышленность комплексĕн ĕçре малта пыраканĕсен слетне халалланă материалсене 2,3-мĕш страницăсенче вулăр.

## Хула кунĕ: пĕрремĕш хут çĕнĕ статуспа

Ыран, ***январĕн 24-мĕшĕнче,*** Нăрлатра Хула кунĕ иртĕ - çĕнĕ 1998 çулта пĕрремĕш тата çĕнĕ статуспа та пĕрремĕш хут. Шăматкунхи мероприятисене çак пысăк событие халалланă, вăл тĕрлĕ интереслĕ уяв программипе палăрса тăрĕ. Ăна ĕç комиссийĕн сĕнĕвĕсене шута илсе ĕçлесе хатĕрленĕ тата январĕн 19-мĕшĕнче район администрацийĕнче хулари предприятисен, организаписемпе учреждениесен ертӳçисем хутшăннипе иртнĕ канашлура паллашма тăратнăччĕ.

***Январĕн 24-мĕшĕнче*** Нăрлата хăнасем килĕç - Тутарстан Республикин Президенчĕн, Тутарстан Республикин Патшалăх Канашĕн представителĕсем тата хăшпĕр министерствăсен ертӳçисем.

Уяв **ирхине 8 сехетре** пуçланĕ. Вăл хулан тĕп площадĕнче иртĕ. Унччен кунта промышленность тата апат-çимĕç таварĕсем сутĕç. Хулари икĕ пасар та çав кун ĕçлемĕ, çавăнпа та пĕтĕм суту-илӳ çакăнта, площадьре пулĕ. Унта райпон, ОРСсен суту-илӳ предприятийĕсем, хресченсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсем, коммерци структурисемпе уйрăм предпринимательсем хутшăнĕç.

**Ирхине 9 сехетре** район администрацийĕнче халăх депутачĕсен Нăрлат Совечĕн организацилле сессийĕ иртет. Вăл вĕçленсен вара хулари Çамрăксен çуртне чаплăн уçма планлаççĕ. Ăна реконструкциленĕ "Родина" кинотеатр бази çинче йĕркеленĕ. Ятне халлĕхе çирĕплетмен-ха, анчах та малашне вăл Нăрлатри культурăн тĕп центрĕсенчен пĕри пуласси пирки иккĕленмелли çук.

**9 сехет те 45 минутра** тĕп площадьре, районти культура çурчĕ умĕнче Хула кунне официаллă уçĕç.

**Ирхине 10 сехетре** районти культура çуртĕнче районти агропромышленность комплексĕн малта пыракан ĕçченĕсен çулсерен иртterекен слечĕ хăйĕн ĕçне тытăнĕ. Вăл вĕçленнĕ хыççăн тутар эстрадин паллă артисчĕсем, районти художество пултарулăхĕн коллективĕсем тата унта хутшăнакансем пысăк концерт кăтартĕç, интереслĕ çынсемпе тĕлпулусем иртĕç. Вăйăсемпе ăмăртусем йĕркелеме палăртнă.

Çав кун Хусантан килнĕ хăнасем хăшпĕр промышленность предприятийĕсенче, хресченсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсенче, строительство объекчĕсенче пулса курĕç.

Çав кунхи программа хулара тата ялсенче пурăнакансемшĕн тахçанччен асра юласса шанатпăр. Хăйсен ĕç потенциалне пурнăçа кĕртме пултарнă район ĕçченĕсемшĕн 1997 çул ăнăçлă пулнă. Нумаях пулмасть илнĕ çĕнĕ статус Нăрлат хулин экономикипе социаллă пурнăçĕнче питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать, çавăнпа та Нăрлат районĕн çыннисем çак куна, январĕн 24-мĕшне, ырă кăмăлпа кĕтсе илес тесе тăрăшнине ăнланма пулать.



## Нăрлат тавраше

*Мĕн тери хитре Нăрлат тавраше.*
*Мĕнешкел пуян кунти уй-хир!*
*Пуç тайса пĕкке хуплать ыраше,*
*Пилĕкрен лăпкать туратлă вир.*

*Таврара юхать илемлĕ юрă,*
*Чĕкĕнтĕр плантаци ешерсен.*
*Кунти пек ниçта та çук пуль урăх*
*Юрлама ăста ĕçчен хĕрсем.*

*Сар хĕвел сăрт хыçĕнчен тухсассăн,*
*Кайăк хур карти шыва анать.*
*Çил тухса вĕрет те кассăн-кассăн -*
*Çарăмсан çаранĕ хумханать...*

***Михаил ЗАХАРОВ.***

### Кăнтăрлахи стационар

Районти тĕп больница ертӳçисем 1998 çулхи плана тĕпе хурса, сахăр завочĕн микрорайонĕнче 20 койка-вырăнлăх кăнтăрлахи стационар уçма планлаççĕ. Ку районти тĕп больницăн ĕçне те çăмăллатать тата çак микрорайонта пурăнакансемшĕн те меллĕ пулать.

### Тӳлевлĕ сиплĕç

1998 çулта районти тĕп больницăра чылай услугăсем тӳлевлĕ пулаççĕ: медицина тишкерĕвĕ, физиотерапи, массаж тата ыттисем те. Ĕçрен пушансан медицина сотрудникĕсене уйрăм ĕçлеме ирĕк параççĕ.

## Ӳсĕмсем савăнтараççĕ

Хресченсен хуçалăхĕсен Кузнецов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнче сысна ĕрчетессинче ĕçсем лайăх пынинче фермăсен коллективĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ, паллах, тĕрлĕ нумай ĕçсене кунта кашниех пысăк яваплăх туйса пурнăçлать. Сысна фермине вунă çул ытла ĕнтĕ Юлия Германовна Саврандейкина ертсе пырать.

Акă пĕлтĕрхи итогсем тăрăх та коллектив аван кăтартусем тунă. Кунта кашни амаран вăтамран 3600 пуç çура илнĕ, ку иртнĕ çулхинчен чылай ытларах. Тĕрĕс-тĕкел ĕрчев илни, ăна сыхласа хăварни аш туса илмелли тата ăна сутмалли задание ăнăçлă пурнăçлама май парĕ.

Район хыпарĕсем

### Çĕрлехи бар

Çак кунсенче чугун çул ОРСĕн промышленность таварĕсен магазинне юсаса çĕнетес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тăваççĕ. Çитес çывăх вăхăтра кунта çĕрлехи бар ĕçлеме тытăнĕ.

### Магазинсем саккăра çитнĕ

Нăрлатри çăкăр пĕçерекен заводăн ултă магазинĕ çумне нумаях пулмасть тата иккĕ хутшăннă. Вĕсенчен пĕри Дружба урамĕн вĕçĕнче, иккĕмĕшĕ вара чугун çул поселокĕнчи мечĕт патĕнче уçăлнă. Кунта тин пиçсе тухнă çăкăр изделийĕсене, çаплах "Зорька" сĕт-çу комбиначĕн, "Нурлатнефть" НГДун продукцине сутаççĕ.

### "Çивĕт" кулач

Çăкăр завочĕн коллективĕ тĕрлĕрен продукци те кăларассине пысăк тимлĕх уйăрать. Хальхи вăхăтра кунта 12 тĕрлĕ çăкăр изделийĕ пĕçереççĕ. Иртнĕ тунтикун магазинсене çĕнĕ продукци илсе килнĕ - пысăк пахалăхлă çăнăхпа мăкăнь хушса пĕçернĕ "Çивĕт" сортлă 400 грамлă кулач. Нăрлатра пурăнакансене вăл килĕшнĕ.

### Чиешнене - автобуспа

Çак эрнере Нăрлат автовокзалĕнчен Чиешнене çитиччен çĕнĕ автобус маршручĕ уçнă. Поселокра тата çывăхри ялсенче пурăнакансем район центрне эрнере пилĕк хутчен çăмăлланах килсе кайма пултараççĕ.

### Лениногорскран - Нăрлата

Эрнере иккĕ - шăматкун тата вырсарникун Лениногорскран Нăрлата автобус çӳрет. Пассажирсем яланах нумай.

### Ялавăрта - пĕтĕмĕшле тĕрĕслев

Çак эрнере Ялавăрти вăтам шкулта пĕтĕмĕшле тĕрĕслев пуçланнă. Район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн ĕçченĕсем темиçе кун хушши кунта вĕрентӳпе воспитани ĕçне пĕтĕмĕшле тĕрĕслĕç. Çав вăхăтрах Берлик-Михайловка тата Петровский поселокĕсенчи пуçламăш шкулсенче те тĕрĕслев иртterĕç.

### Класс руководителĕсем канашланă

Ачасемпе çамрăксен центрĕнче нумаях пулмасть районти шкулсенчи 5-9 классен руководителĕсен семинарĕ иртнĕ, ăна Тутарстан еткерçисемпе ĕçлессин çĕнĕлĕхĕсене халалланă. Çаплах "Обществăлла ача-пăча организацийĕсем" темăпа практика занятийĕсем йĕркеленĕ, çула çитмен ачасем хушшинче йĕркене пăсассине сирсе ярасси çинчен калаçнă.

# Ытарайми тусӑмӑрсем, ҫунатлӑ ӗмӗр ҫыннисем,

## Хуҫалӑха пӗлсе ертсе пырасси пӗчӗк ӗҫсенчен пуҫланать

**Мичурин ячӗпе хисепленекен хуҫалӑх иртнӗ ҫул пӗрчӗллӗ культурӑсен тухӑҫне районта чи нумай пухса илнӗ, унӑн председательне И.Н.Мухамметова Республика столицинче иртнӗ "Тухӑҫ" уявӗнче сцена ҫине чӗнсе чысланӑ. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес отрасльте те хуҫалӑх чылай ӑнӑҫлӑхсем тунӑ. Анчах та Ильяс Нургалеевич тунӑ ӑнӑҫлӑхпа лӑпланса ларасшӑн мар, вӑл малашнехи пысӑк плансемпе пурӑнать.**



- Пирӗн кӑҫала кӑна мар, ҫаплах ҫитес ҫывӑх темиҫе ҫул валли ӗҫлесе хатӗрленӗ программа пур. Рынок экономики хӑйӗн тӳрлетӗвӗсене кӗртет пулин те, ыранхи кун ҫинчен шухӑшламасӑр пурӑнма юрамасть. Пӗлтӗр эпир чылай лаптӑк ҫинче апатлӑх тулӑ акса ӳстертӗмӗр, ӑна тата сахӑр кӑшманӗ сутса хуҫалӑх кассине чылай тупӑш кӗчӗ, халь эпир ӗҫшӗн вӑхӑтлӑ тӳлесе татма пултаратпӑр. Хытӑ тулӑ районта пирӗн патра кӑна акса ӳстернӗ. Ҫакӑн уссине курса, кӑҫал эпир ҫак культурӑна акмалли лаптӑксене анлӑлатма шутлатпӑр. Ҫитес ҫулхи тухӑҫа мӗнле тупӑшлӑрах вырнаҫтарасси ҫинчен эпир халех шухӑшлатпӑр. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессинчи икӗ отрасле аталантарас тӗллевпе интенсивлӑ ҫул-йӗр илтӗмӗр пулсан, апат базине ҫирӗплетес тӗлӗшпе те тӗплӗн тӑрӑшмаллине ӑнланмалла ӗнтӗ. Иртнӗ ҫул тырӑлӑх ӳстернӗ кукурузӑна пин тонна ҫурма чӗрӗ массӑна силослӑх хыврӑмӑр та траншейӑна ҫак кунсенче кӑна уҫрӑмӑр-ха. Хальхи вӑхӑтра ку вӑл выльӑх рационӗнче, уйрӑмах сыснасемшӗн чи хаклӑ апат. Кӑҫал та ҫакӑн йышши кукурузӑна пысӑк участоксем ҫинче ӳстерме шутлатпӑр. Рационта сахӑра-протеина упраса хӑварас тесе пӑрҫа нумайрах акас тетпӗр. Шутлани сӑмахсемпе кӑна иртсе каймӗ, - плансене ӗҫпе пурнӑҫлатпӑр. Ҫуркунне ӑҫта тата мӗнле культурӑсем акмаллине халех пӗлетпӗр. Ӗҫе кооперативсене уйӑрса панӑ. Темиҫе ҫул каялла тунӑ кооператив системине халь тата лайӑхлатнӑ. Халӗ кашни ялтах кооператив, вӗсем пурте "хутӑш" программӑпа ӗҫлеҫҫӗ, урӑхла каласан, сухаланӑ ҫӗре тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен объектсене кашнине пӗр пек уйӑрса панӑ. Кооперативсен ертӳҫисем хушшинче малтанхи тӗп специалистсем те, механизаторсем те пур. Ӗҫ кунта малтан кам тата мӗнле вырӑн йышӑннинче мар, ҫынсемпе ӗҫлеме пӗлнинче, коллектива хисепленинче. Ҫынсен кӑмӑлӗсем ан пӑсӑлччӑр, вӗсем хӑйсем тӗллӗн ӗҫлеме пултарнине туйччӑр, кооперативри ӗҫсем йӗркеллӗ пыччӑр тесе продукцие сутса илекен тупӑшӑн ҫуррине кооперативсене пама халех йышӑннӑ. Продукци мӗн чухлӗ нумайрах туса илсе сутатӑн, ҫавӑн чухлӗ укҫа та нумайрах пулӗ, итогсене пӗтӗмлетнӗ чухне вара кашнин ӗҫне шута илӗҫ. Пӗлтӗр темиҫе КамАЗа тара пани шаннине тӳрре кӑларчӗ, ҫавӑнпа та кӑҫал мӗнпур машинӑна тата урапаллӑ тракторсене уйрӑм ҫынсене пама йышӑннӑ. Хуҫалӑха тытса пырасси ҫакӑн пек пӗчӗк ӗҫсенчен пуҫланать те ӗнтӗ. Ӗҫ чӑн-чӑн хуҫасен аллинче пулсан вара лайӑх результатсем тӑвасса шанма пулать.

**Ӳкерчӗкре: кооператив членӗсем: Александр Тимофеев, Юрий Леваков, Викентий Петров механизаторсем.**

**Н. Азизов сӑнӳкерчӗкӗ.**

# Ашшӗн ҫулӗпе

Фатихпа Гульмия Аглиуллинсем пӗрле пурӑнма тытӑннӑранпа 42 ҫул иртнӗ. Ку ҫемье туслӑ пурӑнать, вӗсем тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак ҫемье членӗсем суйласа илнӗ ӗҫе парӑннипе палӑрса тӑраҫҫӗ.

- Пӗрремӗш кунранах трактористӑн ҫулӑ та тарлӑ тумтирне ҫума тытӑнтӑм та халиччен те ҫапла. Ачасем ӳссен вара ӗҫ тата та хушӑнчӗ. Манӑн шӑпа ҫавӑн пек ӗнтӗ, - тет кулса Гульмия аппа. Кунта "династи" сӑмаха асӑнас темесен те асӑнӑн, вӑл питӗ вырӑнлӑ.



Фатих пиччепе Гульмия аппа пилӗк ача пӑхса ӳстернӗ, вӗсенчен иккӗшӗ аяккинче пурӑнаҫҫӗ пулин те, виҫӗ ывӑлӗ, Фарит, Хамит тата Фиргат ашшӗн ӗҫне малалла тӑсса, хуҫалӑхра механизаторсем пулса вӑй хураҫҫӗ. Ҫемье пуҫлӑхӗн иртнӗ пурнӑҫӗ ҫинчен шухӑшласан, кӗҫӗн Аглиуллинсем ҫӗре, техника юратассине ашшӗнчен вӗреннине хирӗҫлеймӗн.

Унӑн пурнӑҫӗ ҫӑмӑл пулман. Саккӑрта чухнех тӑлӑха юлнӑ та пиччӗшӗпе пурӑннӑ. Кайран вара вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи йывӑр ҫулсем пулнӑ. Ялта сывӑ арҫын юлман, ҫавӑнпа та хуҫалӑхри мӗнпур ӗҫе Фатих пек ачасене пурнӑҫлама тӳр килнӗ. Тракторсен "тапхӑрӗ" ҫитсен, йывӑр ӗҫе хӑнӑхнӑ 17ри яшӑн та ҫак техникӑна ҫӳретесси килнӗ. Пиччӗшӗ те ҫакна ырланӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн вӑл Пӗкӗлмере 6 уйӑх вӗренмелли курса пӗтерсе удостоверени илнӗ. Малтан Чулпанти МТСра комбайнер, кайран вара тӑван "Заря" колхозра тракторист пулса ӗҫленӗ. Пиччӗшӗ пилленипе хӑйӗн ҫемйине йӗркеленӗ.

Хӑватлӑ техникӑпа 30 ҫул хушши ырми-канми ӗҫленӗ Фатих пиччене куҫӗ начар курма пуҫланипе механизатор ӗҫне пӑрахма тӳр килнӗ. "Хусана больницӑна кайрӑмӑр, эпир каялла таврӑннӑ ҫӗре вара Фарит ашшӗн тракторӗпе ӗҫлетчӗ", - каласа парать Гульмия аппа. Ҫапла вара ашшӗн тракторӗ аслӑ ывӑлне Фарита куҫнӑ, ун чухне вӑл вунпиллӗк те тултарман пулнӑ-ха. Халь вара унӑн ӗҫ стажӗ 23 ҫул шутланать. Тырпул пухса кӗртнӗ вӑхӑтра вӑл комбайнпа ӗҫлет, кайран трактор ҫине ларать. Ҫаплах вӑл ҫӗрулми акса ӳстерес тӗлӗшпе ӑстаҫӑ шутланать. Ҫуркунне ӑна кунне 20-шер пахча акма тӳр килет.

Вӗсен амӑшӗ те, хӑйӗн мӑшӑрӗ пекех, 40 ҫул колхозра вӑй хунӑ.

Хальхи вӑхӑтра, мусульмансен канонне тӗпе хурса, аслӑ Аглиуллинсем Ураза тытаҫҫӗ. Фатих пичче пенсие тухнӑ хыҫҫӑн хӑйӗн чылай вӑхӑтне кӗлӗ вулассине халаллать. Ҫапла майпа, вӑл ачисемшӗн ырӑ тӗслӗх пулса тӑрать.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**



## Хисепе тивӗҫлӗ

*Ахметсафинсене хуҫалӑхра хисеплеҫҫӗ. Ҫемье пуҫлӑхӗ - Юнус Ахметсафин выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес отрасльте вӑй хурать, ҫирӗм ҫул ӗнтӗ ӗне выльӑх самӑртать. Тӳрӗ кӑмӑллӑ ӗҫчен. Султан Хасановпа пӗрле пӑхакан ушкӑнри выльӑхсен талӑкри вӑтам виҫи те пӗр килограмм ытла - ҫакна ҫирӗплетет.*

*Гульсира мӑшӑрӗ те, упӑшки пекех тӑрӑшуллӑ. Вӑл та выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетет. Пӗр вӑхӑтра вӗсем пӗрлех, пӗр корпусра ӗҫленӗ.*

*Ахметсафинсем виҫӗ ача ӳстереҫҫӗ, вӗсене пӗчӗккӗренех ӗҫе вӗрентеҫҫӗ.*

*Ӳкерчӗкре: хресченсен хуҫалӑхӗсен "Кондурча" ассоциацийӗн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекенӗ Ю.Ахметсафин.*

*Н.Азизов сӑнӳкерчӗкӗ.*

## Тĕлĕнтермĕшсем

ТĔНЧЕ уçлăхĕнче карлик-çăлтăрсем пур теççĕ. Вĕсем хĕвелтен чылай пĕчĕк. Çав карлик-çăлтăрсем питĕ йывăр япаласенчен тăраççĕ. Сăмахран, хăш-пĕр çăлтăрсен веществине пўрнескене тултарсан, вăл пăравус йывăрăш пулать.

* * *

Пирĕн çĕршыври Камчаткăри, Сахалинти, Курил утравĕсем çинче, Саян тăвĕсем хушшинче, Алтайпа Кавказ çĕрĕсенче вăрман пек çўллĕ курăксем ўсеççĕ. Çав курăксем хушшине кĕрсе кайсан çынни те, лаши те курăнмасть.

*Улах юррисем*

## Аслă çулпа килет таканлă ут

Аслă çулпа килет таканлă ут,
Таканĕсем хăпнă - пусаймасть.
Пиреех курайман тăшманĕсен
Чĕрисем хускалнă - тўсеймеç.

Урхамахсем урпа, ай, çиеççĕ,
Шăлĕсем хавшама пĕлмеççĕ.
Пире кураймансем мĕн каламĕç,
Хăйсем мĕн курасса пĕлмеççĕ.

Аслă улăхра куккук авăтать,
Вĕрене йывăççи хумханать.
Çинçе пĕвĕм çине тăшман таптать,
Çинçе пĕвĕм вăл-вăл авăнать.

Шур пўрт тăрупинчен тĕтĕм тухать,
Кăвак пĕлĕт çумне çыпăçать.
Хамран начар çынран сăмах илтсен -
Çамрăк чĕре çумне çыпăçать.

Тавай, çеçенхире, ай, тухар-и,
Укçа ывăтмалла выляр-и.
Укçисем те тўнтер ўксессĕн,
Эпир ăна курмăш пулар-и.
Пире калакансем мĕн каламĕç,
Эпир ăна илтмĕш пулар-и.

Пухса йĕркелекенĕ
Е.ИЛЮШКИНА.

## Кил-çуртра тыткаланă чухне

* Кухньăри сĕтел çинчи клеенкăн çĕнĕ сăнне упраса хăварма пулать-и? Пулать. Пĕр пек виçепе илнĕ уксуспа хĕвелçаврăнăш çăвĕн хутăшĕпе сăтăрмалла кăна.

* Йăлтăркка сĕтел-пукан, шкаф-шифоньер, тĕкĕр тата кантăк çинче тусан ан пултăр тесен, вĕсене пĕр пай шампунь, пĕр пай антистатик, сакăр пай шыв хутăшĕпе сăтăрма юрать.

* Çуллă сăрăпа сăрланă урай е сĕтел-пукан, шкаф тата шифоньер йăлтăртатса тăччăр тесен, пĕр витре шыв çине темиçе кашăк уксус ярса çумалла.

* Термометрти ртуть юпи темиçе пая ваклanса кайсан, ăна темĕн чухлĕ силлени те пулăшмасть. Ун пек чухне термометр вĕçне икĕ пўрнепе сăтăрмалла кăна. Вăл хĕрсе ăшăнать те, ртуть тумламĕсем хăйсемех пĕрлешеççĕ.

* Эсир юратакан кивĕ пластинка авăнса кукăрăлнăшăн кулянма кирлĕ мар: ăна кантăк листи айне вырнаçтарса хĕвел çине хумалла та каçчен вырттармалла. Каç тĕлне ăна кăларса илме пултаратăр.

* Çĕнĕ çатмапа е чукун сават-сапапа усă курма пуçличчен тĕпне тăвар хурса çулăм çине лартса хĕртмелле. Унтан çав тăварпах сăтăрмалла та çу сĕрсе вут çинче ĕнтмелле.

* Аш арманне вут çумĕнче типĕтмелле мар - çĕççисем мăкалаççĕ. Ун витĕр хут авăртса кăларсанах типет.

* Йĕпсем, булавкăсем, алса-чăлха çыхмалли йĕпсем ан тутăхчăр тесен, вĕсем упранакан вырăна кăштах çăнăх сапмалла. Çапах та тутăхрĕç пулсан, вĕсене пĕр вăхăтлăха супăнь çине чиксе хумалла - вара таса та çутă пулаççĕ.



Ўкрĕ кĕçĕр çĕр çине пĕрремĕш юр;
Тăван ялăн таврашне шуратрĕ пуль.
Тăван ялăм, Хуралту, тĕнчере пур;
Тăван ялăм, вăл пире çухатрĕ пуль.
Тупаймастпăр вăхăтсем яла кайма;
Çарăмсанăн хĕрринче ларса канма.
Сывлăм ўкнĕ çеремпе çарран утма;
Тăван ялăн таврашне курса тухма.
Курăнмаççĕ-тĕр йĕрсем, хупланчĕç пуль;
Пирĕн хыççăн ўснисем таптарĕç пуль.
Таврăнатпăр тĕлĕкре ялти киле;
Тăван ялăм, Хуралту, каçар пире.

Андриян ГРИГОРЬЕВ.

## Пĕлтерўсем

*Виçĕ пўлĕмлĕ приватизациленĕ хваттере икĕ пĕр пўлĕмлисемпе васкавлă улăштаратпăр. 5-19-50 номерлĕ телефонпа 18 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*"Татнефть" пĕрлешĕвĕн, "Газпром", "Лукойл" акцийĕсене сутăн илетпĕр. Телефон: 5-37-69. 747 номерлĕ лицензи.*

* * *

*1995 çулхи ноябрь уйăхĕнче туса кăларнă ВАЗ-21060 сутатпăр, 32000 километр çўренĕ. Телефон: 5-37-69.*

* * *

*1995 çулта туса кăларнă ВАЗ-21061 сутатпăр, КПП 5 пусăмлă. Адрес: К.Маркс проспекчĕ, 4-25.*

* * *

*Ключи поселокĕнчи хуралтăсемлĕ кирпĕч çурт сутăнать. Телефон: 5-23-19.*

* * *

*Кăрмăшри пĕр пўлĕмлĕ хваттер (пĕчĕк çемье пурăнмалли) сутатпăр. Посредник телефонĕ: 5-33-29.*

* * *

*Ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленине опытлă секретарь-машинистка кирлĕ. Штат расписанийĕ тăрăх тўлеççĕ.*

* * *

*Суту-илў павильонĕ сутăнать (тĕп системăран ăшăтаççĕ, документсен пакечĕ пур). 5-23-49 номерпе каçхине шăнкăравламалла.*

* * *

*1994 çулта туса кăларнă ВАЗ-21061 сутатпăр. Телефон: 3-62-24.*

* * *

*"Хозяюшка" магазинта (К.Маркс урамĕ) сутлăхра çăнăх (пысăк пахалăхлă), сахăр песокĕ пур, кирлĕ çĕре çитерсе пама пултаратпăр. "Чебурашка" бутылкисене йышăнатпăр. Свидетельство Б-527.*

* * *

*ГАЗ-66 сутатпăр. Хакĕ 9 миллион тенкĕ. Телефон: 2-28-99.*

* * *

*Çуна çинчи 6х4 пысăкăш гараж сутăнать, хаклă мар. Адрес: К.Маркс урамĕ, 1-33. Телефон: 5-14-41.*

* * *

*Пĕр пўлĕмлĕ хваттер сутатпăр. Телефон: 5-40-88.*

* * *

*1995 çулта туса кăларнă УАЗ-3962 автомашина сутатпăр. Телефон: 5-39-32.*

* * *

*Галина Федоровна Низамеева ячĕпе панă 427698-99-700 номерлĕ страховка квитанцийĕсене тĕрĕс мар тесе шутламалла.*

* * *

*Процент тўлемелле кивçен укçа илетĕп. Телефон: 5-41-19.*

* * *

***Предприятисен ертўçисене пĕлсе тăма***

*Тутарстан Республикин министрсен Кабинечĕн 1997 çулхи август уйăхĕн 13-мĕшĕнче йышăннă 653-мĕш номерлĕ постановленийĕн 12-мĕш пункчĕпе килĕшўллĕн:*

*1998 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса республикăри ялсенче ăшă сечĕсене йăлари пĕчĕк тухăçлă изоляци материалĕсемпе усă курса хывассине чармалла.*

*Ăшă тивĕçтерекен тата строительство организацийĕсем 1997-98 çулсенче ăшă сечĕсене малтан пенополиуритан изоляцийĕпе чĕркенĕ пăрăхсемпе усă курма куçмалла.*

## Пĕр темăпа виçĕ истори

### Каçхи апатсăр юлнă. Анчах чĕрĕ...

Январĕн 17-мĕшĕнче çĕрле Нăрлатри пушар уйрăмне пушар тухни çинчен пĕлтернĕ. Советская урамĕнчи 104-мĕш çуртра пурăнакансем шăнкăравланă: 7-мĕш номерлĕ хваттертен çуннă аш шăрши кĕнĕ. Алăка шаккасан та уçман, РОВД хуралĕн пайĕн нарядĕпе пушарниксен вара алăка çĕмĕрсе кĕмелли çеç юлнă. Хуçи килĕнчех пулнă, анчах та эрех ытлашши ĕçнипе ним туйми çывăрнă. Каçхи апат пĕçерме лартнă кастрюльти шыв тахçанах вĕресе пĕтнĕ, ашĕ çунса кайнă. Çапла, тимлĕ кўршĕсемпе оперативлă пушарниксем шăматкун çĕрле çынна сĕрĕмпе вилесрен, икĕ хутлă çурта вара пушартан çăлнă. Сăлтавĕ - татах эрех ытлашши ĕçни.

### Пĕчĕк кăвартан - кĕл купи

Январĕн 19-мĕшĕнче пушар сигналĕ самоуправленин Пўлеркўлĕнчи Советĕнчен çитнĕ - А.И.Матросов хуçалăхĕ çуннă. Çак ир мунча йăлтах çунса кайнă. Сăлтавĕ эпир хăнăхнинех - вутпа асăрханусăр пулни. Çунакан кăмрăкран кĕл юлассин çулĕ хăш-пĕр чухне питĕ кĕске пулать-çке.

### Номер палăртакан телефон пулăшнă

Çак телефон шăнкăравĕ январĕн 20-мĕшĕнче 1 сехет те 15 минутра илтĕннĕ. Арçын сасси дежурнăя Молодежная урамĕнчи çуртра пушар тухни çинчен пĕлтернĕ. Çак хыпар суя пулнă иккен. "Ырă сунакана" вара пĕлнĕ - номер палăртакан телефон пулăшнă.

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нăрлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нăрлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 856. Заказ № 437